*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

# ХРЕСЧЕН САССИ

61 (2574) [1]
Хакĕ ирĕклĕ

2015
октябрь/юпа
2

1991 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

ЭРНЕКУН

ĔÇÇИ

## Хăмла пахчи укăлчара

**– Паян-ыран хăмла татса пĕтермелле. Ĕç вĕçленнĕ ятпа хамăрăн сăрапа хăналасшăн-ха, – терĕ «АгроРесурсы» пĕрлешĕвĕн коммерци директорĕ Юлия Петровна Кисенко. Типтерлĕ те яка тумланнă, янăравлă саслă хĕрарăм çичĕ теçеткере теме чĕлхем çаврăнмасть. Кусĕсем халĕ те çамрăк чухнехи пек ялкăшаççĕ.**



Юлия Кисенко директор.

### Выртан чул айĕнче шыв юхмасть

Çăмăл машинăпа Вăрмар тăрăхне васканă май вăрăм çула кĕскетме предприяти ĕçĕ-хĕлĕпе хаваспах паллаштарчĕ вăл.

– Пĕрлешĕвĕн хăмла татакан 3 комбайн пур, типĕтекенни – 2. Шел, пĕрне кăçал хута яраймарăмăр. Ăна газ çине куçарасшăн. Дизтопливо хаклă, туянсан та йĕркеллĕ çунмасть. Газпа типĕтнĕ хăмла паха, илемлĕ. Пирĕн хамăрăн база, хăмлана вырăнтах пĕрчĕлетпĕр.

Предприятин 30 гектар хăмла, çав шутра тухăç параканни – 26. Çĕрпӳри опытлă институтпа çыхăнса ĕçлени кăтартăва ӳстерме пулăшать. Хунавне те унтанах туянаççĕ. Ăсчахсен çĕнĕ сорчĕсемпе кăсăкланаççĕ. Юлашки вăхăтра «флагман», «фаворит» сортсем илнĕ. «Вĕсем чир-чĕре чăтăмлă, тухăçлă, альфа кислоти те пысăк тесе мухтарĕç», – терĕ директор.

Хăмлана вунă çул каяллах пĕрчĕлеççĕ. Заводсем ăна ытларах туянаççĕ-мĕн. Пĕрчĕленĕ чĕртаварăн хăйхаклăхĕ пысăкрах. Кăçалхи тăкаксемпе шутласан типĕтнĕ хăмлан 1 килограмĕ 350 тенке ларнă.

**– Илтнĕ тăрăх – сирĕн чĕртавар аякках ăсанать. Нивушлĕ чăваш хăмли вырăнти завода кирлĕ мар?**

– Кирлĕ, анчах хăмли çук. Чăваш Енре çулталăкра 150 тонна типĕтнĕ хăмла туса илеççĕ. Вăл пĕр завод валли кăна. Раççейри заводсене типĕтнĕ хăмла çулталăкра 17 пин тонна яхăн кирлĕ. Ăçтан тупмалла ун чухлĕ? Ирĕксĕрех ют çĕршывсенчен 1 килограмне 2 пин тенкĕ парса туянмалла. Пирĕн тăрăхра «подвязный», «истринский», «московский ранний» сортсем ытларах. Пахалăхне тиркеймĕн: техĕмлĕ, пĕрчĕленĕ, чĕркемленĕ. Эпир ăна тăватă хут йӳнĕрехпе паратпăр. Паян хăмла хаклă, ылтăнпа танах темелле.

**– Туянакан пулсан чăваш хăмлин чапĕ каллех кĕрлеме-янăрама пуçлĕ, тен?**

– Иккĕлентерет. 80-мĕш çулсенче республикăра 4 пин гектар çинче хăмла çитĕнтернĕ. Халĕ 4 хуçалăхра та 95 гектар кăна юлнă вăл. Çĕршывĕпе илсен Мари Республикинче – 16, Алтай крайĕнче 8 гектар. Хăмла татмалли, типĕтмелли агрегатсене сутса янă е тимĕр-тăмăра ăсатнă, пахчисене çумкурăк, йывăç-тĕм пусса илнĕ. Аркатма – çур кун, пуçтарма – çулталăк.

**– Чимĕр-ха, çĕршывра хăмла туса илме патшалăх енчен пулăшасси те ӳссех пырать мар-им?**

– 2013 çулта эпир 1200 пин тенкĕ субсиди илтĕмĕр. Курăмлă пулăшу. Анчах унтанпа федераци бюджетĕнчен пач лекмерĕ. Вырăнтинчен параканни сахал. Юлашки вăхăтра 4 гектар çинче 8 пин хунав лартрăмăр. Пĕр сапанĕ 14 тенкĕ тăнине шута илсен пысăк тăкак. Анчах Çĕрпӳри опытлă институтăн хăмла хунавĕн сертификачĕ çуккипе субсиди тивмест. Çĕршыв, республика шайĕнче хăмла ыйтăвне татса памасăр та «симĕс ылтăн» вăй илеймĕ.

### Пурнăç – тăхăрвунă пăрăнăç

**– Чĕрĕк ĕмĕр шкулта вĕрентнĕ хыççăн пăтрашуллă тапхăрта эсир хăрамасăрах бизнеса, çĕр ĕçне пуçа чикнĕ.**

– 90-мĕш çулсенче, çĕршыв рынок экономикине куçнă вăхăтра, педагогсем те уйăхĕ-уйăхĕпе шалу илеймен. Мăшăрăм вăхăтсăр çĕре кĕнĕ хыççăн ывăлăма пĕччен çитĕнтернĕ. Апла хам çине шанмалли кăна. Хатĕрлев кантурĕ уçса халăхран, хуçалăхсенчен чĕртавар пуçтарса сутнă. Пĕррехинче Екатеринбургран шăнкăравласа чăваш хăмлине тупса пама ыйтрĕç. Путакан улăм пĕрчинче çăлăнăç шыранăн тӳрех «ярса тытрăм». Хуçалăхсен вунă çул ытла сутăнайман чĕртаварне йăлтах вырнаçтартăм. Çакăн хыççăн хăмла çулĕ çине тăтăм.

**– Республикăри хăмла пахчисене çумкурăк пусса илме тытăнни, хăмла сутăнма пăрахни хăратмарĕ-и? Капла эсир те чĕртаварсăр юлатăр вĕт?**

– Чăваш ятне çĕкленĕ «симĕс ылтăн» яланлăхах çухалма пултарни хăрататчĕ. Ăна упраса хăварас тесен хамран тытăнмалла. Вăрмарти хăмла фабрикине, пахчисене суттинне пĕлсен илме шутларăм. Укçа çитменнипе банкран çулталăкне 240 (!) процентпа 80 млн тенкĕлĕх кредит (90-мĕш çулсенче – **авт.**) илтĕм. Парăмшăн кулянни пе çĕрĕ-çĕрĕпе çывăрайман. Çур çĕрте хăраса вăранса каяттăм.

2-мĕш стр. ➔



Альбина Васильевăпа Сергей Николаев ĕçченсем.



Мăнçырмари хăмлаçăсем.

## Правительство тытăмĕ çĕнелет

Сентябрĕн 30-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Иван Борисович Моторина Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председательне лартасси çинчен калакан Указа алă пуснă. Çав кунах регион ертӳçи тин çеç çирĕплетнĕ премьер-министрпа тата ЧР Пуçлăхĕн Администрацийĕн ертӳçин тивĕçĕсене пурнăçлакан Юрий Васильевпа канашлу ирттернĕ. Иван Моторин республика ертӳçине ЧР ĕç тăвакан влаç органĕсен çĕнĕ структурипе паллаштарнă.

Ăна тухăçлă ĕçлеттерес тĕлĕшпе ЧР Министрсен Кабинечĕн Председательне пулăшакан икĕ çум çирĕплетме йышăннă. Хăйсене уйăрса панă тивĕçĕсене кура вĕсем министерствăсемпе влаçăн ытти органĕсен ĕçне тĕрĕслесе тăрĕç.

Иван Моторин палăртнă тăрăх – Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службинчен Чăваш Республикин Ĕçпе социаллă хӳтлĕх министерстви йĕркелеме йышăннă. Çапла майпа хальччен ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерстви ĕçпе тата социаллă аталану енĕпе пурнăçланă ыйтусен пĕр пайĕ çĕнĕ министерствăна куçать. Кивви Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕн министерстви ятлă пулать.

ЧР Чĕрчунсен тĕнчипе çыхăннă объектсене сыхлакан, тĕрĕслекен тата вĕсемпе усă курассине йĕркелекен патшалăх службине пĕтереççĕ, унăн ĕçне ЧР Çутçанталăк ресурсĕсемпе экологи министерстви пурнăçласа пырĕ.

ЧР Пурлăхпа çĕр хутшăнăвĕсен министерстви патшалăх комитечĕн шайĕнче юлĕ.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ палăртнă улшăнусене ырланă, республика Правительствин тытăмĕ федерацин влаç органĕсене хирĕçлеменнине, патшалăхăн штатри служащийĕсен йышĕ ӳсменнине палăртнă.

Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕн тата Чăваш Ен Пуçлăхĕн Администрацийĕн ертӳçин тивĕçĕсене пурнăçлакан Юрий Васильев пĕлтернĕ тăрăх – 2016 çул вĕçне патшалăх служащийĕсен хисепĕ 10 процент чакмалла. "Патшалăх ыйтăвĕсене пĕчĕк йышпа татса памалла. Анчах ĕç пахалăхĕ çухалмалла мар. Йыша пĕчĕклетнĕ май служащисене квалификаци кура урăх ĕçпе тивĕçтерме хушатăп", – палăртнă Михаил Игнатьев.

Ĕнерхи Указпа вăл Юрий Васильева Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администрацийĕн Ертӳçи пулма çирĕплетнĕ. Хальччен Шупашкарти В. И. Чапаев ячĕллĕ производство пĕрлешĕвне ертсе пынă Михаил Резникова тата Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕн социаллă ыйтусемпе ĕçленĕ çумне Алла Салаевăна Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕсем пулма шаннă.

# Сĕт – сиплĕ çимĕç

Шупашкарти Сĕт фестивальне хутшăнакансен йышĕ çулран çул ÿссех пырать. Кăçал та вăл вун-вун çынна пуçтарчĕ. Малтанхи кун Чăваш Енри сĕт юр-варне хатĕрлекен предприятисен машинисен «сĕт караванĕ» иртрĕ. «Сĕт кортежĕ» Шупашкар лапамĕнче чарăнчĕ. Уява пуçтарăннă ватти-вĕтти, вăйпитти «Акконд-Агро» фирмăн, Етĕрнери, Куславккари сĕт завочĕсен тата ытти предприятин çимĕçне хапăлласа астивсе пăхрĕç, чи лайăххине палăртрĕç. Ташă-юрă ăстисем вара хăйсен пултарулăхĕпе кăмăла çĕклерĕç.

Тепĕр кунне «Шупашкар-Арена» Пăр керменĕнче уяв малалла тăсăлчĕ. Ăна савăнăçлă лару-тăрура уçма Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, РФ Федераци Пухăвĕн Федераци Канашĕн членĕ Вадим Николаев тата ытти яваплă çынсем хутшăнчĕç.

Фестиваль сĕт юр-варне, сывлăхшăн сиплĕ апат-çимĕçпе усă курассине сарма пулăшнине палăртрĕ Михаил Васильевич. Чăн та, сĕтре организма кирлĕ япала тулliех. Шел, Раççейре хальхи вăхăтра 8 млн тонна чĕртавар çитмест. Республика вара паха çимĕçпе хăйне туллин тивĕçтерет, ытти регионa та ăсатать. Сĕт туса илессине ÿстерме кирлине те каларĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ. Патшалăх та чĕртавар туса илекенсене, тирпейлекенсене курăмлă пулăшу парать.

Сĕт туса илекенсен наци пĕрлешĕвĕн правленийĕн председателĕ Андрей Даниленко республикăра пĕлтерĕшлĕ мероприяти иртнине ырларĕ. «Чăваш Енри ырă тĕслĕхе çĕршыври ытти регион та пурнăçа кĕртме тытăнчĕ», – терĕ вăл. Ĕçре палăрнисене, ача-пăча конкурсĕнче çĕнтернисене наградăсем, парнесем парса чысларĕç.

Уява пухăннисем сĕт тирпейлекен предприятисен курава тăратнă экспозицийĕсемпе паллашрĕç, çимĕçсене астивсе пăхрĕç, кăмăла кайнисене туянчĕç. Кăçал «Сĕт фестивалĕ» тăваттăмĕш хут иртрĕ. Вицĕ çулта унта 20 пин çын çитсе курнă, 13 тонна сĕт юр-варне сутнă.

# Регистраторсем ĕçне вĕçлерĕç

Чăваш Республикинче, çĕршыври ытти регионти пекех, кăçалхи сентябрĕн 15-мĕшĕнче 2016 çулта иртекен Пĕтĕм Раççейри халăх çыравне хатĕрленес тĕлĕшпе малтанхи тапхăр вĕçленчĕ – регистраторсем çыравăн суйласа илнĕ объекчĕсен списокĕсене палăртрĕç.

Инструктаж тухнă 107 регистратор хуласен территорийĕнче граждансен хушма, ытти уйрăм хуçалăхĕсене çитсе кăтартусене тĕрĕслерĕç. Чăвашстатăн штатра тăман персоналĕ ялхуçалăх производствине тытса пыракан респондентсенчен çĕр лаптăкĕ пуррине, виçине, майракаллă шултра выльăх, сысна, сурăх, качака усранине ыйтса пĕлчĕ. Регистраторсем граждансен садпахча, коммерциллĕ мар дача пĕрлешĕвĕсенче çĕр участокĕсемпе усă курнипе, хуçисем выльăх-чĕрлĕх усранипе кăсăкланчĕç. Штатра тăман персонал республикăри хула-районта (Элĕк, Патăрьел, Хĕрлĕ Чутай, Шăмăршă районĕсенче граждансен сад-пахча, коммерциллĕ мар пĕрлешÿсем çуккипе тишкерĕве кĕртмен) çырав объекчĕсене тишкерчĕç.

Икĕ эрнере регистраторсем 38 пин уйрăм хуçалăха, граждансен коммерциллĕ мар 746 пĕрлешĕвне (унта 114 пин участок) çитнĕ. Çавна май çырава кĕртмелли список çĕнĕ хушма тата уйрăм хуçалăхсемпе, сад-пахча, дача пĕрлешĕвĕсенче участокĕсемпе пуянланнă. Регистраторсем çырав объекчĕсем тăрăх хатĕрленĕ списоксене тĕпе хурса район-хулара шутлав тата инструкторсен йышне палăртассĕ.

Асаилтеретпĕр: Пĕтĕм Раççейри ялхуçалăх çыравĕ 2016 çулхи июлĕн 1 – августăн 15-мĕшĕсенче иртет, аякри территорисенче сентябрĕн 15 – ноябрĕн 15 -мĕшĕсенче.

**Лариса АРСЕНТЬЕВА.**

# Хăмла пахчи укăлчара



Сергей Дмитриев, Геннадий Данилов, Татьяна Николаева.



Владимир Александров механизатор.

← 1-мĕш стр.

ВАЗ-07 машина туянтăм та руль умне ларса ĕçлĕ çулçÿреве тухрăм. Канмасăр, сывăрмасăр тенĕн тар тăкрăм. Парăма çур çултан татрăм, производствăна та хута ятăм.

Ыйтусене телефон урлă мар, куçа-куçăн калаçса татса панă. Владивосток, Чита, Екатеринбург, Иркутск... ăçта кăна çитмен-тĕр. Çĕрле вакунĕ-вакунĕпе хăмла тиесе яраттăмăр.

**– Нивушлĕ хăмларан пысăк тупăш илме, аталанма пулать? Апла мĕншĕн ытти хуçалăх унпа ĕçлесшĕн мар?**

– Ĕçлеме пĕлсен, хăмларан кĕрекен укçана айккине ямасан вăл та пысăк тупăш парать. Кун пирки эпĕ канашлусенче те каланă. Унччен хăмлапа ĕçлекен хуçалăхсем укçа ăшĕнче «ишнĕ». Акă Куславккари «Волга» колхоз миллионер шутланнă. Унти икĕ ĕçчен «Социализмла Ĕç Геройĕ» хисеплĕ ята тивĕçнĕ. Хăмлана 7 комбайн татнă. «Симĕс ылтăн» çитĕнтерме пăрахрĕç те хуçалăх арканчĕ. Хăватлă оборудование йăлтах тимĕр-тăмăра ăсатнă, пахчисене пĕтернĕ. Шел, çĕршыври арăш-пирĕш тапхăрта вăрласси-улталасси те вăй илчĕ. Чĕртаваршăн укçа тавăрман тĕслĕх пайтах пулнă. Çакă та хуçалăхсене хăмларан пистерчĕ курăнать.

Пирĕн предприяти хăмла туса илнипех аталанса пырать. Кăçал производство объекчĕсене юсарăмăр. Кивĕ оборудованисене те улăштарма тăрăшатпăр. Хăмла лаптăкне 50 гектара çитересшĕн. Йывăрлăхсемсĕр мар, паллах. Акă 15-20 çулхи пахчасене те çĕнетмелле. Техника та ванмасăр пулмасть. Саппас пайĕсем хакли кĕсьене самай çÿхетет.

**– Ертÿçĕсем хуçалăхра ĕçлекенсем çителĕксĕррине пăшăрханса пĕлтереççĕ. Ку енĕпе лару-тăру мĕнлерех?**

– Шалу вăхăтра, тивĕçлипе тÿлесен ĕçлекен те пулĕ. Пирĕн те малтанхи тапхăрта уй-хире тухма çынсене тархаслани, ана вĕçĕнче укçапа тăни те пулнă. Сăмаха тытнипе кăна шанăça кĕтĕмĕр. Халĕ тупăшран тÿрех шалу памалăх уйăратăп. Пĕр ертÿçĕ: «Тархасшăн, укçа парса пулăш», – тесе кивçен ыйтăччĕ. Нухрата шалу валли хăварнăран килĕшмерĕм. «Эй, халăх 3-4 уйăх та укçасăр чăтать», – тесе ÿкĕтлерĕ. Вăхăт иртнĕ май каллех унпа тĕлпултăмăр. «Хуçалăхра ĕçлекенсем тарса пĕтрĕç», – пуçне тытса ларчĕ хайхи. Тĕрĕс, тÿлевсĕр камăн тар тăкас килет? Ĕçлекене улталама хăтланни хăйнех пырса çапнă.

Хĕрÿ тапхăрта предприятире 120 çын тăрăшать. Пĕр чăрмав – тĕп йыша хĕллехи вăхăтра ĕçпе тивĕçтересси. Ку ыйтăва та татса парăпăрах.

**– Эсир чĕртавара та вырăнтах тирпейлетĕр – сăра вĕрететĕр.**

– Çапла, Муркаш районĕнчи Сыпайкассинче «ПивКо» пĕрлешÿре сăра вĕрететпĕр. Унта 6 çын вăй хурать. Талăкра 1 тонна продукци хатĕрлесе кăлараççĕ. Маларах Етĕрне районĕнчи «Ленинская искра» хуçалăхăн сăра заводне илесшĕнччĕ. Шел, грузинсен аллине лексе тĕппипех арканчĕ вăл.

Такăнмасăр пулмасть. Малтанхи хут 4 тонна сăра вĕретсен тăкма тиврĕ – илекен çийĕнчех тупаймарăмăр. Суту-илĕве паха продукципе кăна тухмалла. Уйрăмах малтанхи утăм тунă чухне. Халĕ пирĕн сăра республикăра кăна мар, Мускав, Чулхула таранах ăсанать.

Машина Мăнçырмари хăмла татакан комбайн патне çитсен калаçу ирĕксĕрех татăлчĕ. Хăватлă техника вăхăтлăха шăпланнă-мĕн. Арçынсем кăлтăка тÿрлетнĕ хушăра хĕрарăмсем канма ларнă.

– Кăçал тухăç аван, гектартан 22 центнер, – савăнса пĕлтерчĕ Зоя Владимирова бригадир. Кунне 1,5 пин тенкĕ ĕçлесе илнине те палăртрĕ вăл. Çавăнпа ĕçе вырнаçас текен нумай.

Комбайн каллех хыттăн кĕрлесе кайрĕ. Ĕçченсем хăйсен вырăнне йышăнчĕç. Эпир вара хăмла плантацине çул тытрăмăр. Тÿпенелле кармашнă хăмла аврисем çĕрелле йывăррăн усăннă. Тулли курланкăсем куçа савăнтараççĕ.

– Кĕр енне тĕтреллĕ çанталăк кĕтме тытăнатпăр. Тĕтрере хăмла пучахĕ хытать, писсе çитет, – хăмла курланкине ытараймасăр тытса пăхрĕ Юлия Кисенко. – Пĕрле вăй хуракансем чĕререн тав тăвас килет.

Юлия Петровнăпа Вăрмарти тĕп базăна, Шупашкарти офисне те çитсе куртăмăр. Офисра предприяти тивĕçнĕ дипломсемпе, наградăсемпе, медальсемпе тĕлĕнсе паллашрăм. Вĕсен ĕçĕ-хĕлне, таварне ыттисем те тивĕçлипе хакласçĕ. Предприяти шăпишĕн чунĕ лăпкă унăн. Тилхепене Андрей ывăлне шанса парассине те пытармарĕ вăл. Çар çынни предприятие юхăнтармастех.

**Лариса НИКИТИНА.**
**Автор сăнÿкерчĕкĕсем.**

# Утмалла та, чупмалла та

Иртнĕ вырсарникунхи "Наци кросне" Чăваш Енре пурăнакан 60 пине яхăн çын тухнă. Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, ЧР Пуçлăхĕн Администрацийĕн ертÿçи Юрий Васильев, тĕнче тата Европа чемпионки, Олимп вăййисен кĕмĕл призерĕ Олимпиада Иванова, ытти явaплă ертÿçĕсем Шупашкар хулинчи чупу трассине парăнтарнă.

Пĕтĕм Раççейĕпе сарăлнă "Наци кросĕ" пирĕн республикăра çулсерен вăй илсе пынине палăртнă ЧР Пуçлăхĕ. "Çĕршывăн спортпа чи туслă регионĕнче пурăннипе мăнаçланма пултаратпăр халĕ эпир. Кунта кашни виççĕмĕш çын массăллă спортпа тачă çыхăну тытать", – тенĕ вăл.

Чăн та, Чăваш Ен тĕнчипе паллă çăмăл атлетсен тăван кĕтесĕ пулни паллă. Наци кросне тухнă кашни çыннах çĕнтерÿçĕ теме пулать. Спортпа туслă çын çирĕп, ĕçре маттур, пурнăçри темĕнле йывăрлăха та çĕнтерме пултарать. Çавăнпа çак ырă йăла ăруран ăрăва куçса пымалла.

Ыран – Пĕтĕм тĕнчери утакансен кунĕ. 1991 çултанпа октябрĕн пĕрремĕш канмалли кунĕнче Çĕр чăмăрĕ çинчи миллионшар çын уява утса иртterме урама тухать. Раççейре ку йăла пĕлтĕртенпе вăй илнĕ. Шупашкар хулинче "Раççей – спорт çĕршывĕ" форум иртнĕ кун хутшăннă вăл пĕтĕм тĕнчери юхăма.

Кăçал пирĕн республикăра каллех утакансен парачĕ иртет. Унта сывă пурнăç йĕркине кăмăллакан, тĕрлĕ ÿсĕмри тата тĕрлĕ професси çыннисем пине яхăн хутшăнмалла. Вĕсем хушшинче хăварт утакансем те, Скандинави уттине килĕштерекенсем те, васкамасăр уçăлса çÿреме юратакансем те пулĕç. Финиша утса çитекенсене пурне те сертификатсем парĕç.

Утакансен кунĕнчех "Тухтăрпа уçăлса çÿрени" акци иртет. Ăна Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерстви çулсерен йĕркелет. Дистанцие утса парăнтарнă чух çынсем тухтăрсемпе (вĕсем ятарлă тумпа пулĕç) финиша çитиччен канашлама пултараççĕ.

**Ирина ПАВЛОВА.**

Çĕнĕ ял – çĕнĕ шай

# Пурнăçа ăнтарма пĕлсен

**Патăрьел районĕнчи Анат Туçа тăрăхĕнче пурăнакансем пурнăçа ăнтарма пĕлеççĕ. Ĕçчен халăх килти хушма хуçалăхра мĕн кăна ӳстермест. "Ара, эпир те пахчари çĕре пушă вырттармастпăр", – тетĕр-и? Çапли çапла та, анчах Анат Туçа çыннисем кишĕре, хĕрлĕ кăшмана 15-20-шер сотăйран, севок сухана çур гектартан сахал мар акаççĕ. Ытти пахчаçимĕç пирки асăнмастăп та. Харпăрлăхри çĕр лаптăкĕ çитменрен ял тăрăхĕнне арендăлаççĕ. Курттăммăн укçа тума ӳркенмеççĕ. Тепри акса ӳстернине чее усламçăсене йӳнĕ хакпах тыттарса ярать, Анат Туçари Плешковсем вара паянхи пурнăçпа тан утаççĕ. "Чĕртавара пуçтарса çӳрекенсем хака ытла йӳнетсен туянакана интернет урлă шыратпăр", – терĕ Плешковсен кинĕ Валентина.**



Плешковăсем севок сухан вăрлăхне хатĕрлеççĕ.

Икĕ ăру – ватăсемпе çамрăксем – пĕр килте килĕштерсе пурăнаççĕ. Аслисем йывăр ĕçре писĕхсе ӳсни паллă. Валентинăпа Владимир Плешковсем хальхи çамрăксем пек хулана вĕçтерес темен, ялта çемьепе çĕр ĕçлесе, вылăх усраса аталанма тĕв тунă. Унашкаллисем сахал, мĕншĕн тесен ял ватăлать. Тĕслĕхрен, шкула пĕрремĕш класа каякан ача кăçал кунтан пач пулман.

Халăх шучĕпе хакласан Анат Туçана пĕчĕк тесе калаймăн. Ялта 300 ытла кил хуçалăхĕ, анчах пĕртен-пĕр кĕтӳри ĕне вылăх йышĕ 30 яхăн пуçпа кăна танлашать. Плешковсен кинĕ çак районти Упирен пулнăран танлаштарма пултарать. Тăван ялĕнче 250 кил хуçалăхĕ, пĕтĕмĕшле ĕне шучĕ те çавнашкалах.

Хĕр кунта качча килнĕренпе 6 çул çитет. Социаллă ĕçчен пулма хулара аслă вĕренӳ заведенийĕнче пилĕк çул ăс пухнă. Пурăнма яла юласси çинчен пит шухăшламан. "Халĕ каллĕ-маллĕ выляс çук ĕнтĕ. Вăхăтăнвăхăтăн ӳкĕнни те, тарăхни те пулнă-тăр", – тет çамрăк та шухă, ĕçчен хĕрарăм. 2 çул ял тăрăхĕн администрацийĕнче тăрăшнă. Анчах пĕчĕк укçа малалла çул уçма паман. Ĕçре кун кунланипе уйри сухан та, кишĕр те, ытти пахчаçимĕç те çумланаймасть. Килти хушма хуçалăха аталантарма çамрăксене пурнăç хăй хистенĕ. Çулла яра кун пахчара, хĕлле çамрăк арăм вăхăтлăха Мускава кайса ĕçлесе килет.

Упăшки, Владимир, çĕр ĕçĕн специалисчĕ пулни те пурнăça ялпа çыхăнтарма хистенĕ пулĕ. Шупашкарти ялхуçалăх академине çамрăка вырăнти ялхуçалăх предприятийĕ вĕренме янă. Хуçалăхра агрономра 2 çул вăй хурсан çемьешĕн ĕçленине нимĕн те çитменнине ăнланса илнĕ.

Арăмĕ упăшкипе килĕшнĕ кăна мар, хальччен çитĕнтернĕ пахчаçимĕçпе пĕрле çĕр çырли (виктори) ӳстерме сĕннĕ. 5 сотăй (лаптăка тата пысăклатасшăн) çинче ир пулакан сорт июнь пуçламăшĕнче витрепе татмалăххах писсе çитет. Ăна инçете ăсатмаççĕ, ытларах пайĕ ялтах сутăнать.

Ытти пахчаçимĕçе туянма Пенза, Хусан, Дон çинчи Ростов хулисенчен автомашинăсем çитеççĕ. Туянакана Плешковсем интернет урлă тупаççĕ те хăйсен тавар калăпăшне висĕллĕ машина саккас параççĕ. 3-4 тоннăллисем пахчаçимĕçе киле пырсах илеççĕ.

Вылăх йышлă усранăран (сăвакан 5 ĕне, вăкăрсем, хур-кăвакал тата ытти те) тĕрлĕ йышши кăшман ӳстереççĕ. Тĕслĕхрен, сахăр кăшманĕ пăрушăн усăллă теççĕ.

Плешковсем экологи тĕлĕшĕнчен таса пахчаçимĕç çитĕнтерме тăрăшни савăнтарать. Владимир агроном пулнăран сухан, кишĕр, хĕрлĕ кăшман йăранĕсем çинче гербицидпа ытла усă курмасть. Çумкурăка алăпа çумлаççĕ. Малтанхи тапхăрта уйри çĕр лаптăкне ытла иртĕхсе кайнă йытпырширен тасатнă чухне кăна хими препарачĕпе пĕрĕхтернĕ.

Плешковсен çемйи питĕ ĕçчен. Ĕне сумалла чухне арçын хĕрарăма кĕтмест, ятарлă икĕ аппарат пуртан тытать те сăвать. Пахчаçимĕç лартма, кăларма, утă çулма мĕнпур техника пур. Çамрăк кил хуçи агроном пулнисĕр пуçне платник ĕçне те пултарать, тимĕре шăратса çыпăçтарма та маçтăр. Кăçал çапла майпа хапха тунă. Çитес çул валли эрешлесе илемлетесшĕн. Ку ĕçе Владимир хĕллехи кунсенче пурнăçлать.

"Хĕлле çывăрса та ывăнатпăр мар-и? Ларас килмест. Çуллахи ĕçшĕн тунсăхласа çитетпĕр", – харăссăнах хуравларĕç çамрăк кинпе унăн хунямăшĕ Зоя Витальевна.

Анат Туçари "Каменная" урамра пурăнакансем туслă. Пахчари ĕçсене пĕрле пурнăçлаççĕ. Пĕринне пĕтерсен черетпе теприне пулăшаççĕ. "Ĕçлеме ӳркенмесен, пурнăça пĕлсе пурăнсан ялта та лайăх", – тесе ытахальтен каламасть ĕмĕрне ялхуçалăхĕнче ирттернĕ (сысна фермине ертсе пынă) Зоя Витальевна Плешкова.

**Ирина НИКИТИНА.**

# Халăх тăрăшсан чиркӳ те çĕкленет



Анатолий Смирнов.

**Куславкка районĕнчи Кармалсем Чăн Таса Турă Амăшĕ Мария çуралнине асăннă кун ял уявне ирттернĕ. Вĕсем ăна ĕлĕкренех уявланă. Ялти чиркӳ те ун ячĕпех пулнă. Анчах совет влаçĕ вăхăтĕнче ăна аркатнă. Унтан машинăпа трактор паркĕ, лавкка туса хунă. Телее, чиркĕвĕн никĕсне пĕтĕмпех çĕмĕреймен. Турă çуртне шăпах çак вырăна çĕнĕрен хăпартма шут тытнă халăх. Малтанхи чиркĕвĕн висине те сыхласа хăварнă.**



Кирек хăш тăрăхра та хастарлă, хыт утăмлă çынсем пур. Ку ялта çак ĕçе йĕркелесе пыраканĕ – Анатолий Смирнов. Анатолий Витальевич маларах Çурçĕрте ĕçлесе пурăннă. Тивĕçлĕ канăва тухсан тăван ялне куçса килнĕ. Мăшăрĕпе Зинаида Сергеевнăпа 2011 çулта сăвапллă ĕçе пуçарма шут тытнă. Çавна май Шупашкар тата Чăваш митрополичĕнчен Варнавăран пил ыйтма кайнă, ял халăхĕпе пуçтарăнса прихут канашĕн ертӳçине, казначейсене суйланă. «Халăх укçи-тенкипе хăпартрăмăр чиркĕве. Спонсорсем те пулăшрĕç. Кашни çын хăйĕн тӳпине хывнă. Никам та хирĕçлекен пулман. Ниме мелĕпе ĕçлерĕмĕр», – пĕлтерчĕ Анатолий Витальевич.

Хăшне-пĕрне ятран асăнма сĕнчĕ вăл. Акă ылтăнланă купола тума Юрий Зорин, Алиса Скворцова, Галина Купцова, Людмила Иванова укçа-тенкĕпе чылай пулăшнă. Алиса Григорьевна – Энтри Пасар ял тăрăхĕн пуçлăхĕ. Ертӳçĕ ял халăхне тĕслĕх кăтартни вара пĕлтерĕшлĕ пулăм шутланать. Петр Крылов техника тĕлĕшпе нумай пулăшнă. Паллах, ăста строительсене те манса хăвармалла мар: Юрий Овчинников, Валерий Горбунов, Сергей Смирнов, Федор Смирнов, Павел Павлов.

Халĕ чиркӳре шалти ĕçсем юлнă. Вĕсене тума специалистсем кирлине каларĕ прихут канашĕн ертӳçи Анатолий Смирнов. Вĕсем вара Мускава ĕçлеме çӳреççĕ. Чиркĕве тепĕр çул вĕçлеме палăртнă Кармалсем.

«Çакăнта килсе юрлас ĕмĕтпе пурăнатăп эпĕ, – пирĕн калаçăва хутшăнчĕ Энтри Пасар культура çурчĕн директорĕ Светлана Индюкова. – Манăн асатте Филипп Галкин малтанхи чиркӳре казначей пулса тăрăшнă. Манăн та унăн кун-çулне малалла тăсас килет».

Мĕнех, ĕмĕтленни çиттĕрех. «Халăх сурсан кӳлĕ пулать» тени тĕрĕсех. Вăл кар тăрсан чиркӳ те хăпарать. Ĕç ӳсĕмĕ вара – куç умĕнчех.

**Валентина МАКСИМОВА.**
**Автор сăнӳкерчĕкĕсем.**

◆ ШУХĂШ

# Ватă çын пилĕ – ĕмĕре

Ваттисен кунне малтанах Европăра уявланă, ун хыççăн – Америкăра. Ăна çавăн пекех Скандинави çĕршывĕсенче те лайăх йĕркелеççĕ. 1990 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен вара Ваттисен кунне пĕтĕм тĕнчери уявсен шутне кĕртнĕ. 1992 çултанпа çак куна Раççейре ирттерме пуçланă. Ватăсене патшалăх енчен пулăшу пани, тĕрлĕ çăмăллăхпа тивĕçтерни – пĕлтерĕшлĕ пулăм. Раççей Президенчĕ Владимир Путин кăçал Чăваш Республикинчи 35 ветерана Ваттисен кунĕ ячĕпе ятран саламлани те ырă тĕслĕх шутланать.

Уяв уяв пек иртмелле. Анчах та ват çынна çулталăкра пĕрре асаилни çителĕклĕ-ши? Паллах, çук. Парнерен ытларах ăшă сăмах кирлĕ ăна. Пĕрле пухăнса чей ĕçни те уншăн темрен паха. Юлашки вăхăтра Ваттисен кунне ял тăрăхĕсенче, предприяти-организацисенче пуçтарăнса уявлаççĕ. Вĕсене чысласа концертсем, ытти мероприяти ирттереççĕ. Хăй вăхăтĕнче пĕрле вăй хунă çынсем уявра пуçтарăнсан чун каниччен калаçаççĕ. Ялти ватă тĕнче курма тухса çӳремест. Çулçӳреве кайма укçи-тенки те çитмест, кăмăлĕ те çук унăн. Унта-кунта çӳриччен кил-тĕрĕшре чăхĕпе, вылăх-чĕрлĕхпе аппаланать вăл. Е килçуртне тирпей-илем кĕртет. Америкăри тата Европа çĕршывĕсенчи ватăсен тивĕçлĕ канăва тухсан пурнăç пуçланать çеç. Вĕсем ют çĕршывсене кайса çӳреççĕ, канаççĕ, сывлăхĕсене çирĕплетеççĕ. Пирĕн асаннесемпе асаттесен, кукаçисемпе кукамайсем кредит ăшĕнчен тухаймаççĕ. Хăшĕ-пĕри, çемьепе пурăнакансkер, кил-çурт йĕркелеме е ытти ĕç-пуç валли илнĕ кредита хăйĕн пенси укçинчен тӳлет.

Асли çумĕнче кĕçĕнни пулни – тĕрек. Йĕркеллĕ, пĕр-пĕрне хисеплекен, сума сăвакан кил-йышра ват çыннăн ĕмĕрĕ те вăрăм. Патăрьел районĕнчи Шăнкăртам ялĕнчи тутарсен çемйисенче 3-4 ăру пĕрле пурăнать. Çавна май аснăнă ялта 90-100 çула çывхаракансен йышĕ пысăк. Сăмах май, Чăваш Енре 100 çул урлă каçнă 58 çын пурăнать. 80-85 çултан иртнисен шучĕ вара – 5 пин ытла.

Шăнкăртам çамрăкĕсем тăван тăрăхран кайма васкамаççĕ. Ашшĕ-амăшĕпе пĕрле кун кунлаççĕ, ачисене çитĕнтереççĕ, капмар суртсем лартаççĕ. Ĕлĕк чăваш çынни те кĕçĕн ывăлĕн çемйипе пурăннă. Халĕ çак пулăм çухалса пырать. Чылай çамрăк ялтан вуçех тарать е çурт вырăнĕ туянса уйрăлса тухать. Апла пулсан тутарсен воспитани йĕрки çирĕпрех-ши? Е тăванлăх туйăмĕ вăйлăрах аталаннă-ши?

Тайăлнă карта-хуралтăна, ват çын пек малалла ӳпĕннĕ кил-çурта курсан чун ыратать. Çакнашкал çуртра пурăнса ĕмĕрĕсене ирттерме тивет хăшĕ-пĕрин. Сăмахран, пĕлĕшĕме ачисем килĕнчен кăларса янă. Халĕ вăл ашшĕ-амăшĕн кивелнĕ пӳртĕнче хăйĕн юлашки кунĕсене иртterет, чирлĕскер вырăнпа выртать. Юрать, хĕрĕ пăхать ăна. Хăй вăхăтĕнче вĕсем мăшăрĕпе пилĕк ача ӳстернĕ, ура çине тăратнă, пурне те çемье çавăрма, мăнукĕсене çитĕнтерме пулăшнă. Ватлăхра вара никама та кирлĕ мар вăл. Ывăлĕн çуртĕнче амăшĕ валли пĕр пĕчĕк кĕтес те тупăнман тейĕн. Паллах, пурнăçра темĕн те пулать: хирĕçӳ-харкашу, çапăçу. Анчах та пĕрпĕрне каçарма пĕлмелле, уйрăмах ватă çынна.

Кун-çул урапи вара çаврăнать те çаврăнать. Çак шăпа хăйсене пырса тивессе шухăшламаççĕ-ши ачисем? Вăй-хал тапса тăнă чух амăшĕн пурнăçĕ кăсăклантармасть вĕсене. Ялан çамрăк, ырă-сывă пурăнатпăр теççĕ пулас. Ăраскал вара пĕрешкел çулпа чупса иртме те пултарать. «Ватă çынна хĕрхенмесен хăвна йывăр пулĕ» тенине асра тытасчĕ.

Тĕнче статистикине ĕненес-тĕк общество çулран çул ватăлса пырать. 2002 çулта 10 çынна 60 çулти пĕр çын тивнĕ, 2050 çул тĕлне вара 5 çын пуçне 1 çын пулĕ. Ватлăхран пăрăнса иртме май çук. Вăл ват тутиллĕ ан пултăр çеç. Аслă ăрăва ăшă сăмахпа савăнтарма пĕлесчĕ, ватă çын пилне тивĕçесчĕ.

**Валентина ПЕТРОВА.**



ЫЙТУ – ХУРАВ

## Кодиеум

**Икӗ ҫул каяллах илемлӗ ҫулҫӑллӑ чечек парнелерӗҫ. Ҫеҫке ҫурманпа пӗрех вӑл. Ҫулҫи тӑрӑххларах, пысӑк, сарӑ-хӗрлӗ йӑрӑмлӑ. Вӑхӑтра шӑвармасан ҫулҫи шанма, тӑкӑнма тытӑнать. Мӗнле чечек-ши вӑл? Ҫеҫке ҫуртӑр тесен мӗн тумалла?**

**Ирина МИТРОФАНОВА.**
**Сӗрпӳ районӗ.**



Сире кодиеум парнеленӗ. Вӑл килҫурта хӑтлӑх, илемлӗх кӳрет. Ӑна шӑварсах тӑмалла, ҫутӑ лайӑх ӳкекен вырӑна лартмалла. Унсӑрӑн ҫулҫи типет, тӑкӑнать. Ҫавӑн пекех нӳрӗ сывлӑша кӑмӑллать. Типӗ ҫӗрте, уйрӑмах ҫулла, кодиеум ҫулҫине тӑкма тытӑнать. Ҫавӑнпа уяр, шӑрӑх ҫанталӑкра ҫулҫине ӑшӑ шывпа сирпӗтмелле. Ӑна ирхине тумалла, каҫ енне ҫулҫӑ ҫинчи шыв пӑсланса пӗтмелле. Ҫакӑ чечеке чирчӗртен упрать. Чечек чӳлмекне нӳрӗ вак чул ҫине лартма юрать.

Ҫулла кодиеума уйрӑмах лайӑх шӑвармалла. Хӗлле вара – сахалрах, чӳлмекри тӑпрана ытлашши типме памалла мар.

Кодиеум ӑшӑ, ҫутӑ вырӑнта аван ҫитӗнет. Анчах хӗвел пайӑркинчен упрамалла. Енчен ҫулҫи симӗсленчӗ, илемлӗхне ҫухатрӗ пулсан – ҫутӑ ҫитмест.

Чечеке мартра е апрельте куҫарса лартмалла. Ку ӳсен-тӑран тӑвӑр вырӑна юратать. Ҫавӑнпа ӑна ытлашши ирӗклӗ, пысӑк чӳлмеке лартмаҫҫӗ.

Ҫуркунне ҫамрӑк хунавне касмалла, ирчен кӑштах типме хумалла. Унтан уйрӑм чӳлмеке куҫармалла. Тымар яриччен хӗвел пайӑрки ӳкесрен асӑрханмалла. Унӑн ҫеҫки вӗтӗ, куҫа илӗртмест. Ӑна илемлӗ ҫулҫишӗн ӳстереҫҫӗ.

Чечекӗн пӗр ҫитменлӗх – вӑл наркӑмӑшлӑ. Тунин, ҫулҫин сӗткенӗ ӳт-тире лексен вӗтелет. Килти выльӑх-чӗрлӗх, ачапӑча ӳсен-тӑрана ҫӑвара хыпасран асӑрханмалла.

## Симӗс помидор сиенлӗ

**Симӗс помидор сиенлӗ пулнине илтрӗм. Манӑн вара ун пекки чылай. Хӑшӗ-пӗри хуралма та тытӑнчӗ. Халӗ ӑна тухса тӑкмалла-ши?**

**Валерий САВЕЛЬЕВ.**
**Элӗк районӗ.**

Ҫанталӑк сивӗтнӗ май пахчаҫӑсем йӑран ҫинчи ҫимӗҫсене васкавлӑн пуҫтарса кӗртме тытӑнаҫҫӗ. Тӑм тивсе сиенленесрен помидора та пиҫсе ҫитмесӗрех татма тивет. Кайран вӑл пиҫет-ха, анчах сивӗ лекнӗ томат хӗреличченех хуралать. Сая ярасран симӗс помидора тӑварлаҫҫӗ, унран салат хатӗрлеҫҫӗ тата ытти те.

Анчах ҫакна манмалла мар: пиҫсе ҫитмен томат сиенлӗ. Унра соланин наркӑмӑш пур. Вӑл симӗс помидорта виҫерен иртсен ҫын наркӑмӑшланма пултарать: вӑй чакать, ҫывӑрас килет, сывлама йывӑр, пуҫ ыратать. Ҫавӑнпа ӑна асӑрханса ҫимелле. Ача кӗтекен, кӑкӑр ӗмӗртекен хӗрарӑмсен симӗс помидор ҫимелле мар. Ку тӗлӗшпе ачапӑчан, ватӑ ҫынсен те асӑрханмалла. Ҫиес килсен соланин виҫине чакарма томата вӗри шывра пӑшӑхламалла.

ВЫЛЬӐХ-ЧӖРЛӖХ

## Ӗне вити ӑшӑ та типӗ пултӑр

Ӗне витине кирпӗчрен е чултан тума пулать. Анчах йывӑҫран хӑпартнине нимӗн те ҫитмест. Кирпӗч вите ҫирӗпрех, паллах. Ҫав вӑхӑтрах унта сивӗ пулнӑран выльӑх час-часах шӑнса чирлет.

Пӗренерен купаланӑ вите чӑтӑмлӑ пултӑр тесен никӗсне чулран тӑваҫҫӗ. Тислӗк купи патне илсе тухакан стена та чулран пулмалла. Чуллӑ витере стена сивӗре питӗ хӑвӑрт сивӗнет, япӑх "сывлать". Ҫанталӑк ҫуркунне енне сулӑнсан час ӑшӑнмасть, ҫавна пула шалти стена вӑйлӑ нӳрленет.

Кирпӗч стена сывлӑша хӑй витӗр лайӑх кӑларнӑран ун ҫинче нӳрӗк сахал пуҫтарӑнать. Вите тума ытти йышши строительство материалӗпе те усӑ курма юрать.

Пӗр ӗне валли урай лаптӑкӗшӗ 6 тӑваткал метртан кая мар пулмалла. Пӑрӑвӗпе пӗрле тӑрсан 10 тӑваткал метра ҫити пысӑклатмалла. Стена тӑршшӗне 2,5 метр тума юрать. Ҫавах та вите тунӑ чух урай сарас ӗҫ ҫине уйрӑмах тимлӗ пӑхмалла. Вӑл ҫӗр шайӗнчен ҫӳллӗрех пулмалла. Ӑшӑ тытмалла, ун витӗр выльӑхӑн шӗвӗ каяшӗ, шыв сӑрхӑнмалла мар. Шӗвек юхса анмашкӑн урая 2-3 см хӑяккӑнрах тумалла. Ытлашши сӗвеклетмелле мар, мӗншӗн тесен выльӑх урине амантма пултарать.

Урая тӑм ҫапса тусан аван, ун ҫине хӑма нихӑш енне те сикмелле мар ҫапӑнса лартӑр. Тӑмсӑр, йывӑҫран кӑна тунӑ урай хӑми витӗр тислӗк шывӗ сӑрхӑнать. Кайран вӑл ҫӗрет, сывлӑша сиенлӗ газпа, аммиакпа наркӑмӑшлантарать. Тӑмсӑр урая час-часах юсамалла, ку ӗҫ тӑкаклӑ.

Маччана хулӑн, пӗр-пӗрин хушшине шӑтӑк хӑварман хӑмасенчен тӑваҫҫӗ. Уҫӑ вырӑн юлсан вӗсене хупламалла, тӑмпа сӗрмелле, ҫиелтен пӑчкӑ кӗрпи е хӑйӑр (5-10 см хулӑнӑш) сармалла. Шартлама сивӗрен хӳтӗленме маччана икӗ хутлӑ тусан та юрать. Иккӗмӗш сий ҫине типӗ хӑйӑр, ун ҫине улӑм тата типӗ пӑчкӑ кӗрпи вырнаҫтараҫҫӗ.

Айккинчи стенасем ҫинче 0,5 х 0,7 метр виҫеллӗ икӗ-виҫӗ чӳрече тусан аван. Вӗсен тӑршшӗ выльӑх пуҫӗнчен ҫӳллӗрех пулмалла.

Витере ӗне тӑмалли вырӑн йӗркелемелле. Унӑн сарлакӑшӗ – 1,1 м, тӑршшӗ 1,7 метр пулмалла. Ун умне апат памалли хатӗр (кормушка) вырнаҫтармалла. Выльӑх тӑракан вырӑн хыҫӗнче 10 см тарӑнӑш, 20 см сарлакӑш, тислӗк пуҫтармалли енне кӑшт тайӑлакан шӑтӑк тумалла. Капла тислӗк шывӗ аялалла юхса анать.

Тислӗк пухӑнакан вырӑнтан ҫӳлерехри стена ҫинче чӳрече касаҫҫӗ. Ун витӗр тислӗк кӑлараҫҫӗ. Чӳречене усӑлса хупӑнмалла тумалла.

Ятарлӑ вырӑнта ӗне ытла ан хускалтӑр тесен ӑна кӑкараҫҫӗ. Анчах кӑкарчӑкра вӑл чӑрмавсӑр тӑма, выртма, апат ҫиме, шыв ӗҫме пултартӑр. Выртса тӑмалли вырӑнта йывӑҫ урай сарсан лайӑх, ҫиелтен вӗтетнӗ улӑмпа е пӑчкӑ кӗрпипе сапмалла: ӗне типӗ вырӑнта вырттӑр.



## Сурӑхшӑн усӑллӑ

Ҫуркуннерен пуҫласа кӗркуннеччен сурӑх кӗтӳре ҫӳресе апатланать. Анчах та шурлӑхлӑ, айлӑм вырӑнсенче ҫӳретессинчен асӑрханмалла, унсӑрӑн выльӑх вар-хырӑма сӗртекен чирсемпе аптрама пултарать. Варвитти ересрен кӗтӗве яриччен сурӑха 5-6 кун утӑ ҫитереҫҫӗ. Каҫхине таса шыв кӑна ӗҫтереҫҫӗ. Кӗтӳ ҫӳретмелли вырӑнта курӑк япӑх ӳснӗ пулсан килте утӑ тата хутӑш апат (пӗр пуҫа 100-200 грамм) пама юрать. Ҫавӑн пекех картара яланах выльӑх тӑварӗ пулмалла.

Хӗл каҫарма сурӑх валли тӗрлӗ йышши апат хатӗрлеме ан манӑр. Утӑ, улӑм тӗп вырӑнта пулмалла. Тымарҫимӗҫ лартса ӳстерӗр. Сахӑр кӑшманӗ, кишӗр, топинамбур пулсан аван. Ҫавӑн пекех сурӑх кавӑн, кабачок, ҫӗрулми (чӗрӗлле тата пӗҫернине) килӗштерет. Пӗр выльӑха сӗтеклӗ апат 1-2 килограмм кирлӗ.

Ҫитериччен тымарҫимӗҫе лайӑх ҫумалла, унсӑрӑн выльӑх вар-хырӑм чирӗпе аптрама пултарать.

Апата тымарҫимӗҫпе пуянлатни сурӑха ӳт хушма пулӑшать, ҫӑм пахалӑхне лайӑхлатать.

Хушма апат (концентрант) шутне сӗлӗ, урпа, тулӑ, куккурус, авӑртнӑ тырӑ каяшӗ (отрубь) кӗрет. Вӗсенче тутлӑхлӑ япала (протеин, сахӑр, крахмал, ҫу) нумай. Виҫеллӗ апатлас тесен хутӑша пӗлсе хатӗрлемелле: 20 процент сӗлӗ, 50 – урпа, 10-шар процент – куккурус тулӑ тата тырӑ каяшӗ. Урпана вӗтетсе памалла. Капла сурӑх хырӑмӗнче вӑл лайӑх ирӗлет. Пӗрчӗллӗ тырӑ ытлашши самӑрлатать. Ҫакӑ малаллахи ӑрушӑн сиенлӗ.

Апат тӗлӗшӗнчен ытлашши тӑкакланас темесен ҫулла хурӑн, ҫӑка, акаци, ӑвӑс йывӑҫӗсенчен милӗк хатӗрлеме юрать. Сурӑх вӗсене хаваспах ҫиет.

ПАХЧАҪӐ

## Сухан ҫӗресрен

Чирпе сиенленнӗ сухан ҫӗрет. Мӗн тумалла?

1 Чир-чӗре чӑтӑмлӑ сорт суйламалла. «Эльдорадо» сорт уйрӑмах ӑнӑҫлине палӑртаҫҫӗ пахчаҫӑсем.

2 Лартас умӗн севока «Ниуиф-1» препаратра дезинфекцилемелле (30 л шыва 13 процентлӑ препарат 10 г ярса хутӑштармалла), 10 минут лартмалла.

3 Ҫитӗннӗ вӑхӑтра сухана 1 процентлӑ бордос шӗвекӗпе виҫӗ хутчен сапмалла, витрене пӗр апат кашӑкӗ ҫӑнӑх ямалла.

Вӑрлӑхран ҫитӗнтернӗ сухан лайӑх упранать. Эпир вара сухан пуҫне лартатпӑр. Ӑна вӑхӑтра пуҫтарса кӗртмелле. Ҫулҫи мӑйӗ таран сарӑхсан – кӑлармалла. Ҫитӗннӗ вӑхӑтра ҫӗре лайӑх кӑпкалатмалла: сухан мӑйӗ усӑ пулмалла. Кӑларнӑ пахчаҫимӗҫе хӗвел ҫинче 10 кун типӗтмелле. Лайӑх типсен аврине пуҫӗнчен 3 см ҫӳлерех касмалла. Ӑна ҫӳхен сарса пластмасса ешчӗкре упрамалла.



## Управа хуратпӑр



**КУПӐСТА**. Шурӑ пуҫлӑ купӑста килти условисенче те лайӑх упранать. Кӗркунне, шӑнтас умӗн, купӑста пуҫне тымарӗпех кӑлармалла, уйрӑлса тӑракан симӗс ҫулҫинчен тасатмалла. Ҫил витӗр вӗрекен вырӑна ҫакса темиҫе кун типӗтмелле. Унтан нӳхрепре е сивӗ ытти вырӑнта маччаран ҫыхса хумалла. Ҫапла майпа ҫуркуннеччене упрама пулать. Сывлӑш температури 1-10 градус пулмалла, пӳлӗмри нӳрӗклӗх – 90-98 процент. Хӗлле купӑстана пӑхсах тӑмалла, ҫӗрӗшнӗ ҫулҫинчен иртмелле.

**Тепӗр мел.** Купӑста пуҫне ҫиелти ҫулҫисенчен тасатмалла. Тунине шпагатпа ҫыхмалла, унтан ҫимӗҫе ҫӑра тӑмпа ҫулҫи курӑнми пуличчен сӗрмелле. Уҫӑ вырӑнта типӗтмелле. Лайӑх типсен нӳхрепре е сивӗ вырӑнта ҫакса хумалла. Тӑмлӑ купӑста вӑрах вӑхӑт упранать.

**КӐШМАН.** Ӑна хӑйӑрпа хутӑштарса ешчӗке хурсан ҫуркуннеччене лайӑх выртать. Ешчӗк тата тымарҫимӗҫ типӗ те таса пулччӑр. Упрама пӗр пек калӑпӑшлӑ, вӑтам кӑшман суйламалла. Ҫимӗҫе тымарне аялалла туса пӗр рет хумалла. Ҫиелтен пӗр сий таса, кӑштах нӳрлӗ хӑйӑр сармалла, унтан каллех – кӑшман, хӑйӑр. Нӳхрепре 0-2 градус пулмалла, сывлӑшри нӳрӗклӗх – 85-90 процент.

Сӑмах май, ҫак мелпе кишӗр те лайӑх упранать.



## Хуппи усӑллӑ

Апат-ҫимӗҫ хатӗрленӗ чухне сухан хуппине ҫӳп-ҫап савӑтне пӑрахатпӑр. Вӑл вара микроэлементпа, ытти тутлӑхлӑ япалапа пуян. Сӑтӑрҫӑсене тӗп тӑвать, ӳсен-тӑрана ӳсме, аталанма пулӑшать. Унран хатӗрленӗ шӗвекпе пахчаҫимӗҫӗн сарӑхнӑ ҫулҫине сирпӗтмелле. Хӑяр ҫакӑн хыҫҫӑн лайӑх ҫитӗнет, ҫимӗҫне те ытларах парать. Пӳлӗмри чечексем вара ҫӑра та илемлӗ пулаҫҫӗ, темиҫе хут чечеке лараҫҫӗ. Вӗсене чир-чӗр те тапӑнмасть.

Сухан хуппине кӗрхи-хӗллехи вӑхӑтра пуҫтарма меллӗ. 1 л сухан хуппине (чышса тултармалла мар) 10 л шыва ямалла, вӗрилентермелле (вӗреме кӗртмесӗр). Витрене хупӑлчипе хупса 4 кун тӑрӑлтармалла. Унтан сӑрхӑнтармалла, тӗтреллӗ ҫанталӑкра ӳсен-тӑрана сапмалла.

## СЫВЛĂХ



### Сĕнÿсем

✓ Кĕл чечек куç çивĕчлĕхне, хăлха илтессине, чĕре ĕçне лайăхлатма пулăшать. Уйрăмах вăл ваттисемшĕн усăллă. Хĕрлĕ чечеке чей пек пиçĕхтерсе ĕçмелле.

✓ Ăшаланă, çуллă апат мĕн чухлĕ сахалрах çиетĕр – шыçă чирĕпе чирлес хăрушлăх çавăн чухлĕ чакать.

✓ Хăвăрт ватăласран сыхланма пĕр уйăх кашни кун чĕрĕк лимона хуппипех çимелле. Çавăн пекех выç варла пĕр апат кашăкĕ олива çăвĕ ĕçсен те юрать.

✓ Пĕçернĕ кăшмана тип çупа хутăштарса ирсерен выç хырăмла 200-300 грамм çини ăш хытнине иртерет. Кун пек чухне сливăпа сĕлĕ пĕçернĕ шыв та пулăшать.

### Ишеми чирĕнчен

• 12-15 пуç хĕрлĕ клевера пĕр стакан шыва ярса 3 минут вĕретмелле, кăштах сивĕнсен чей вырăнне ĕçмелле. Пыл хушсан аванрах. Хĕлле чăрăш, хыр лăссинчен чей вĕретмелле. Кунне пĕр хутчен вир пăтти, пĕчĕк салă татăкĕ çимелле. Утă, хăмла минтерĕ çинче çывăрмалла.

• Чĕре сасартăк аптратсан ларăр та сăмсапа пĕр 10 минут хăвăрт, кĕскен сывлăр.

• Ишеми чирĕнчен кĕркунне катăркас шĕвекне ĕçни аван. Тепĕр сĕнÿ: чăтăмлă пулăр, пур-çукшăн хыпса ан ÿкĕр. Ĕмĕр вăрăм, пурнăç вара пĕрре кăна килет.

### Пыл тата укроп вăрри

Пыр шыççи аптратсан, температура чакмасан шурă эрехпе пыла 1:1 виçепе илмелле, хутăштармалла, çывăрас умĕн ĕçмелле. Çапла тусан нимĕн туйми çывăратăр, пыр парĕсем (гланды) те çемçелеççĕ, чир те иртет.

Тепĕр мел: 1 стакан укроп вăррине 0,5 литр эрехе ямалла, 3-4 кун тĕттĕм вырăнта лартмалла. Кунне 3-4 хутчен пĕрер чей кашăкĕ ĕçмелле, анчах тÿрех çăтмалла мар, пырта кăштах тытмалла.

### Склерозран

Тупă курăкĕн (мордовник) вăррин шĕвекĕпе сипленсе пăхăр. Ăна 2 чей кашăкĕ илмелле, тин вĕренĕ 1 стакан шыва ямалла. Термосра çур талăк техĕмлетсе лартмалла. Сиплĕскере кун каçа 3-4 хутчен ĕçмелле. 2 уйăх сипленмелле, 1 уйăх хыççăн 10 кун тăхтав тумалла. Кайран сиплев курсне каллех малалла тăсмалла.




### Çÿçе çирĕплетме

Çÿç тăкăннинчен вĕлтĕрен настойки пулăшать. Ăна çапла хатĕрлемелле: вĕлтĕрене аш арманĕпе вĕтетмелле, спиртпа хутăштармалла (1:1 виçепе), ăшă вырăна лартмалла, сăрăхтармалла. Настойкăна холодильникра çур çул тытма юрать. Ăна эрнере пĕр хутчен çÿçе сĕрмелле.

### Палан пулăшать

Унăн çырлине çĕр шăнма тытăнсан çеç пухмалла. Ăна дуршлаг çине ярса вĕренĕ шывпа пиçĕхтермелле, унтан ирмелле. Çырла нимĕрне пылпа (1 литр çырла пуçне 1 стакан пыл) хутăштармалла, техĕмлетсе лартмалла. Тепĕр эрнерен эмел хатĕр. Çак хутăш юн пусăмĕ пысăккинчен, хĕрарăм тата хырăмлăх чирĕсенчен сипленме пулăшать. «Палан шĕвекĕ 99 чиртен сыватать», – теççĕ халăхра. Ăна кунне 3 хутчен пĕрер апат кашăкĕ выç варла ĕçмелле.

Палан ÿслĕке те иртерет. Унăн çырлине, сахăр песукне тата шурă эрехе пĕр пек виçепе илмелле, хутăштармалла, тĕттĕм вырăнта çур уйăх тытмалла. Ўслĕк аптратсан эмеле кунне 3 хутчен пĕрер апат кашăкĕ ĕçмелле. Унпа астмăран та сипленме пулать.

### Магни çитмест-и?

Апла пулсан мăйăр, шăккалат тата фасоль çийĕр. Юлашки вăхăтра сирĕн çÿç ытларах тăкăнма пуçларĕ е чĕрне сийленсе хуçăлать пулсан – организма магни çитмест.

Кунне тăватă хутчен магни фосфатне пĕрер таблетка ĕçме юрать. Паха микроэлемент тĕрлĕ çимĕçре те упранать. Вăл пăрçа йышши культурăсенче пур, ытларах вара – шăккалатра, вăрман мăйăрĕнче.

*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*

## ТĔПЕЛ

### Хĕле хатĕрленсе

**АШ КОНСЕРВИ**

*Кирлĕ пулать: 600 г ĕне выльăх ашĕ, 1,5 чей кашăкĕ тăвар, 20 пĕрчĕ хура пăрăç, 3 лавр çулçи, 1,6 л шыв.*

1. Ĕне ашĕн çемçе пайне çумалла, пысăк мар касăкпа вакламалла (3 см), мультиваркăна (вăл пулмасан тарăн çатмана) ямалла.

2. Тăвар, хура пăрăç, лавр çулçи хушмалла, 800 мл шыв ямалла, мультиваркăра 3,5 сехет пăшăхламалла («томление» программа çине лартса).

3. Палăртнă вăхăт иртсен юлнă шыва тултармалла (вăл аша хуплатăр), каллех 3,5 сехет пăшăхламалла.

4. Хатĕр çимĕçе стерилизациленĕ банкăна тултармалла, çиелтен шÿрпине ярса хупмалла. Ăна сивĕ вырăнта упрамалла.

**САЛĂ ТĂВАРЛАТПĂР**

*Кирлĕ пулать: 1 кг салă, 1 стакан шултра тăвар, 1 пуç ыхра, 5-6 лавр çулçи, 1 чей кашăкĕ авăртнă хура пăрăç.*

1. Салăна çумалла, салфеткăпа типĕтмелле. 7х5 см хулăнăш пысăк мар касăкпа вакламалла.

2. Ыхрана тасатмалла, кашни шăлне 3-4 пая турамалла. Унтан салă касăкне кăштах касса ыхра чикмелле. Çиелтен тăвар, пăрăç сĕрмелле.

3. Формăна пĕр сий тăвар сапмалла, ун çине салăна тирĕпе аялалла туса хумалла. Çиелтен – тăвар, лавр çулçи. Йывăр япалапа пусăрăнтармалла. Сивĕ вырăнта 2 кун тытмалла. Салăна кашни кунах çавăрмалла.

4. Тăварланă салăна пакета тултармалла, сивĕ вырăнта упрамалла.

### Кил хуçи хĕрарăмне

**САЛĂ СУЙЛАТПĂР**

• Салă кăштах шупкарах, хĕрлĕ-шурă тĕслĕ пулмалла, хулăнăшĕ – 3-4 см;

• Салăра ашĕ нумай тăк хытă пулать;

• Салă тирĕ çÿхе, çемçе пултăр;

• Тирне шăрпăк чиксе пăхăр: çăмăллăнах шăтарсан – салă çемçе, йывăррăн тирĕнсен е пач кĕмесен хыттине пĕлтерет. Кун пек çимĕçе туянма тăхтамалла.

**ПĔЧĔК ХУМЛĂ КĂМАКА**

Пĕчĕк хумлă кăмакара пицца, кукăль-çăкăр ăшăтнă чухне стаканпа шыв юнашар лартсан çемçе пулаççĕ.

**КИШĔР ШАНСАН**

Ăшăра кишĕр шансан 30 минут шывра тытмалла. Каллех сĕтеклĕ пулĕ, качăртатма пуçлĕ.

**КУПĂСТА КВАСĔ**

Купăстана вĕттĕн турамалла, шыв, çĕпре ямалла (шывра ирĕлтерсе). Çичĕ кунран 1 кашăк пыл, чĕптĕм хĕрлĕ пăрăç хушмалла.

**ТЕХĔМЛĔХ ВЫРĂННЕ**

Кишĕр, кăшман аврине вĕттĕн тураса яшка пĕçерме усă курмалла. Хаклă техĕмлĕхрен те пахарах. Ăна хĕлле валли типĕтме е шăнтма пулать.

**ÇУЛЛĂ ÇАТМА**

Вĕри çатмана чей юлашки ярса 2 сехете хупласа лартмалла – çу шăрши пĕтет.

**ТИМĔР БАНКА**

Пушаннă консерв банкине кăларса пăрахма ан васкăр. Вăл – ÿсентăраншăн тимĕр çăлкуçĕ. Ăна йывăç-тĕм тымарĕ çывăхнерех чавса чикмелле. Ўсен-тăран чечеке лайăх ларать, тухăç ÿсет.

## ЧĂННИ ТЕ ПУР-ТĂР

### Ĕçмелле е çук?

Техас (АПШ) университечĕн ăсчахĕсем тĕпчевĕ тăрăх – эрех-сăра пач сыпман çынсем ĕçкĕçсенчен маларах вилеççĕ. 20 çул иртернĕ тĕпчеве 1800 çынна (55-65 султисем) явăçтарнă. Вăрах вăхăт пынă тĕпчев çакна палăртнă: эрех-сăра пач ĕçмен çынсен 69 процентĕ 65 çула пурăнса çитеймен. Ĕçкĕçсен – 60, виçеллĕ сыпакансен 41 проценчĕ. Чи хăрушши – эрех-сăра сасартăк пач ĕçме пăрахни. Кун пек çын пурнăçран тата та хăвăртрах уйрăлни палăрнă. Çавăнпа ăсчахсен шучĕпе эрех ĕçмелле, анчах виçеллĕ.

### Вилĕмсĕр йывăç

Олива çăвĕ сĕтел çинчен татăлмасть темелле. Унăн çимĕçĕпе салатра та усă кураççĕ. Мĕн пĕлетпĕр-ха çу йывăçĕ пирки? Çынсем ăна 6 пин çул каяллах лартса çитĕнтерме пуçланă. Крит утравĕ çинче çимĕçĕнчен çу юхтарнă. Çулталăкра 40 млн çу йывăçĕ лартса хăвараççĕ. Кашни 10 çеккунтра тĕнчере пĕр тонна олива çăвĕ çиеççĕ.

Олива йывăçĕ вилĕмсĕр шутланать. Хăшĕ-пĕри 1500 çул ытла пурăнать. Вăл 500 çула çитсен ун çинче ункă йĕркеленме пăрахать.

Хальхи тапхăрта Елеонски сăрчĕ çинче çитĕнекен çу йывăçĕсене (Иисус хăйне арестлес умĕн кĕл тунă вырăн) радиоуглеводород тĕпчевĕпе тишкернĕ. Ăсачахсем палăртнă тăрăх – вĕсем 1092, 1166, 1198 çултанпах лараççĕ. Апла вĕсем Христоса та курнă.

Чăн та, çак йывăç тĕлĕнмелле çирĕп, чăтăмлă. Ăна пушар та, касса татни те хăратмасть – тымарĕнчен каллех хунав çитĕнет.

Çĕр çинчи чи ватă çу йывăçĕ шалтан çĕрнĕ, хуппи кăна юлнă. Вăхăт иртнĕ май шалтан каллех çамрăк хунав шăтса тухнă.

Олива çăвне туса илессипе Европа çĕршывĕсем (Испани, Греци, Итали ытларах) малта, 64 процент. Тунис – 11, Турци – 8, Марокко – 5, Сири – 2, ытти çĕршыв 10 процент.

Олива çăвне çулталăкра çын пуçне усă курассипе Греци çитекенни çук – 24 литр. Итали, Испани – 14, Тунис, Португали, Сири – 8 литр. Раççейре вара çулталăкра çын пуçне 0,1-0,2 литр кăна усă кураççĕ. Пирĕн çĕршыва ăна Испанирен (58 процент), Италирен (28), Грецирен (8,5) тата ытти çĕршывран турттараççĕ.

**Пĕлме.** Олива çăвĕпе апат-çимĕç ăшалама аван. Ăна ытлашши хĕртмесен унра усăллă япаласем упранаççĕ. Апла унпа тепĕр хут та усă курма пулать. 190 градус вĕрире çура сиенлĕ хутăшсем пуçтарăнаççĕ. Ăшаланă чухне çу вĕри пулмалла. Капла çимĕçе сăрхăнайманнипе ытлашши çуллă пулмасть. Анчах çакна асра тытмалла: олива çăвне ытти çупа хутăштармалла мар.

**Валюта.** Крит утравĕ çинче пурăнакансене ĕлĕк олива çăвĕ кирек мĕнле ыйтăва татса пама пулăшнă. Унпа укçа-тенкĕ вырăнне çу парса тухтăрпа е чиновникпа татăлнă. Раштавра ача-пăча ăна савăтра илсе çÿренĕ.

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Октябрь, 2 – эрнекун | Октябрь, 3 – шăматкун | Октябрь, 4 – вырсарникун | Октябрь, 5 – тунтикун | Октябрь, 6 – ытларикун | Октябрь, 7 – юнкун | Октябрь, 8 – кĕçнерникун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 5.55 | 5.57 | 5.59 | 6.01 | 6.03 | 6.05 | 6.07 |
| | анать | 17.25 | 17.22 | 17.20 | 17.17 | 17.14 | 17.12 | 17.19 |
| Кун тăршшĕ | | 11.30 | 11.25 | 11.21 | 11.16 | 11.11 | 11.07 | 11.03 |
| УЙĂХ | тăхри | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать |
| | кунĕ (12 сехет тĕлне) | 19-мĕш кун | 20-мĕш кун | 21-мĕш кун | 22-мĕш кун | 23-мĕш кун | 24-мĕш кун | 25-мĕш кун |
| | | Йĕкĕреш паллинче | Йĕкĕреш паллинче | Рак паллинче | Рак паллинче | Арăслан паллинче | Арăслан паллинче | Арăслан паллинче |

арестленĕ. Еçе тĕпчеме пуçланă ĕнтĕ.



◆ КУÇМА ТУРХАН ÇУРАЛНĂРАНПА 100 ÇУЛ ÇИТНĔ МАЙ

# «Сĕве Атăла юхса кĕрет» роман – аваллăх тĕкĕрĕ



"Пур вĕт çынсем: ăшă пайăрки пекех ытарайманлăх парса тăраççĕ. Куçма Турхан та çаван пекех пулнă. Сăн-питĕнчен ыттисенчен уйрăлса тăмалли нимех те çукчĕ: сарлака питçăмарти, кукша пуç, куçлăх витĕр сăнакан çутă куç. Утма васкамастчĕ. Чăваш кĕнеке издательствине пыратчĕ те нихçан та пўлĕмсем тăрăх çўреместчĕ. Валем Ахунпа Асклаида Соколова патĕнче калаçса ларатчĕ. Пĕр çынна та усалпа асăнмастчĕ.

Куçма Сергеевич хăй çинчен нимех те каласа памастчĕ. Питĕ сăпайлăччĕ. Манăн унран шкул ачисем валли çырнă "Кĕтне хĕрринче" повеçĕ мĕнле çурални çинчен ыйтса пĕлес килетчĕ. Хăюлăх çитерейморĕм, калаçаймарăм. Мĕн тери чуна пырса тивекен илемлĕ повеç! Ялти шкулта вĕреннĕ чухне алăран ямасăр вулаттăм. 1981 çулта "Тăван Атăл" журнала ĕçлеме куçрăм та Куçма Турхана текех тĕл пулмарăм", – палăртать Герман Желтухин журналист Куçма Турхан çуралнăранпа 100 çул çитсе пынине халалласа çырнă статйинче.

Куçма Сергеевич Турхан (Сергеев) 1915 çулхи октябрĕн 8-мĕшĕнче Комсомольски районĕнчи Вăрманхĕрри Чурачăк ялĕнче чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Ялти пуçламăш шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Сĕнтĕрвăрринчи ача çуртĕнче ўснĕ.

Вулама юратнă вăл. 1931-1934 çулсенче Канашри Н. Добролюбов ячĕллĕ педагогика техникумĕнче вĕреннĕ. Çав вăхăтрах "Пионер сасси" тата "Çамрăк хресчен" хаçатсен хастар корреспонденчĕ пулнă. Техникум хыççăн Аслă Чурачăкри шкулта ĕçлеме тытăннă. Ленинградри В. Воровский ячĕллĕ журналистика институтне куçăн мар майпа вĕренме кĕнĕ. 1935 çулсенче ăна Шупашкара Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи Радиоинформаци комитетне чĕнсе илнĕ, унта вăл литературăпа драма кăларăмĕсен редакторĕнче ĕçленĕ. Каярахпа тĕп редактор ĕçĕсене туса пынă.

